27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 23 ЫТЛАРИКУН 101(6596) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 20-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 19-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 31 самолетне персе ÿкернĕ.

МАЙĂН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 21-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 20-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 52 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен пехотипе танкĕсем, паха позицисем туртса илме хăтланса, темиçе хут атака турĕ. Пĕр соединенири чаçсем тăшман атакисене сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 600 виллине ыхăн выртса юлнă.

Украинăри 3-мĕш фронтăн летчик-истребителĕсем кун каçиччен сывлăшра 15 хут çапăçнă, тăшманăн 28 самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн истребительсен ушкăнĕ тăшманăн 26 самолетне атакăланă. Старши лейтенант Черногор çав çапăçура нимĕçсен «Фокке-Вульф-190» йышши 2 самолетне персе ÿкернĕ, майор Дикий, кĕçĕн-лейтенант Петров, кĕçĕн-лейтенант Кузьмин тата лейтенант Морозов кашниех пĕрер самолет персе ÿкернĕ. Капитан Мадаев тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнелрехре пĕр чаçри боецсем çĕр каçиччен тăшманăн икĕ атакине сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă.

Салютин старшинапа Шаров красноармеец нимĕçсен тылне кĕрсе кайнă та тăшман çинчен питĕ хаклă сведенисем пухнă. Каялла таврăннă чухне разведчиксем пĕр ял хĕрринче нимĕç хуралçи сыхласа тăракан бронетранспортера курнă. Бронетранспортер çумне тупă кăкарнă пулнă. Кÿршĕри пÿртре пĕр ушкăн гитлеровец ларнă. Пирĕн разведчиксем нимĕç хуралçи пÿрте кĕрсе каясса кĕтсе тăнă, вара лешĕ пÿрте кĕрсенех чÿречерен темиçе граната вăркăнтарнă, пÿртрен чупса тухнă нимĕçсене автоматсемпе персе вĕлернĕ. Шаров красноармеец (вăл шофер пулнă) бронетранспортера çавăнтах хута янă. Пултарулă разведчиксем çак бронетранспортерпа тупа тĕрĕс-тĕкел хайсен чаçне илсе çитерсе панă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем тăшманăн Нарва заливĕнче тăракан карапĕсен ушкăнне пырса çапнă. Вĕсем çав карапсене бомбăсем пăрахса штурмланă. Бомбăсем тÿрех пырса тивнипе хуралта тăракан икĕ караппа икĕ тральщик шыва путнă. Тăшманăн ытти карапĕсене чылай пысăк сиен кÿнĕ.

Сывлăшри çапăçура нимĕçсен 6 истребительне персе ÿкернĕ.

* * *

Майăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕ Финн заливĕнче тăшманăн 6.000 тонна таякан суднине атакăласа шыва путарнă.

* * *

Белорусс партизанĕсен Могилев облаçĕнче кĕрешекен темиçе отрячĕ çĕрле нимĕçсен пысăк гарнизонне тапăннă. Сасартăк тапăнса, партизансем нимĕçсен 134-мĕш пехотнăй дивизийĕн хирти комендатурипе хуçалăх подразделенийĕсене аркатса тăкнă. 100 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. 38 автомашинăпа 5 пысăк склада сирпĕнтерсе, çунтарса янă.

Брест облаçĕнчи партизансен отрячĕсем пĕр уйăх хушшинче тăшманăн темиçе вунă эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Совет патриочĕсем тăшманăн фронталла каякан поезчĕсене танксене шемелли пăшалсемпе ăнăçлăн переççĕ. Çав вăхăт хушшинче 115 паровоз тата тăшманăн çарсемпе боеприпассем тата хĕçпăшал турттарса пыракан 300 вагонĕпе платформине ытла çĕмĕрсе тăкнă е сиепленĕ.

* * *

Гитлеровецсем Эльзаспа Лотарингирe пурăнакан французсене нимĕç çарне ирĕксĕрлесе мобилизациленĕ те Совет Союзĕпе Германи фронтне хăваласа килнĕ. Анчах та Эльзаспа Лотаринги çыннисем Совет Союзне хирĕç вăрçасшăн мар, çавăнпа вĕсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе е пĕчченшерĕн тыткăна парăнаççĕ.

Аяларах Хĕрлĕ Çар енне тарса каçнă французсем каланисене пичетлетпĕр.

Нимĕçсен 211-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 317-мĕш полкран тыткăна парăннă салтак Шарль К. çапла каласа кăтартнă: «Нимĕçсем Эльзасра хаярланса пурăнаççĕ, француз патриочĕсене вĕлереççĕ. Эльзасри темиçе пин çынна концентрациллĕ лагерьсене хупса лартнă, Польшăна тата ытти оккупациленĕ çĕршывсене янă. Темĕн чухлĕ çемьене сапаласа янă — çемьери пĕр çынна пĕр çĕре, теприне тепĕр çĕре хăваласа кайнă. Эльзас çыннисене нимĕçсем пĕтĕм Европа тăрăх сапаласа ячĕç. Ман аттене вĕсем Польшăна янă, аннене Германие ирĕксĕр ĕçлеме хăваласа кайнă, мана фронта ячĕç. Эпир, французсем, Гитлер салтакĕсен формине тăхăнса, совет çĕрĕнче выряссемпе вăрçни пирĕн чĕрене питĕ хытă ыраттарса тăчĕ. Эпир Хĕрлĕ Çара чунтан-чĕререн юрататпăр, çавăнпа та ăна хирĕç вăрçасшăн пулман. Эпĕ выряссем патне тыткăна хăрани парăнмарăм, эпĕ нимĕç оккупанчĕсене курайман пирки парăнтăм. Эпĕ нимĕçсене хирĕç вăрçасшăн, вĕсене хайсем тунă мĕнпур преступленисемшĕн тавăрасшăн, çавăнпа та эпĕ Гитлер çарĕнчен тартăм».

Нимĕçсен 28-мĕш мотострелковăй полкĕнче тăнă салтак Жозеф Д. çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть эпĕ хам суралнă вырăнта Лотарингире пултăм. Паллакансем патне кĕрсенех мана çĕнĕ çĕнтерÿ тунипе саламларĕç. Выряссем Одессăна илнĕ иккен. Вырăс çарĕсен çĕнтерĕвĕсемшĕн французсем хĕпĕртеççĕ. Вĕсем çакна пĕлсе тăраççĕ: нимĕçсем Россияра мĕн чухлĕ ытларах поражени тÿсеççĕ, Франци асапланасси те çавăн чухлĕ хăвăртрах пĕтсе пырать».

Нимĕçсен 8-мĕш танковăй дивизийĕнче тăнă салтак Пьер Л. çапла каласа кăтартнă: «Гитлер çарĕнче тăнине эпĕ кашни французшăн чи пысăк намăс та инкек пулса тăрать тесе шутлатăп. Нимĕç мундирне ирĕксĕр тăхăнтартнă француз-патриот хайне вĕренне çыхса вилĕм шăтăкĕ патне туртса кайнă пекех шутлать. Эпир, Эльзас çыннисем, фронта килнĕ чухне çул çинчех хамăр хушăра выряссем енне куçасси çинчен калаççа таталтăмăр. Мана выряссем енне куçма часах май килчĕ. Эпĕ тыткăна вăрçăран пăрăнса çÿресшĕн парăнмарăм. Çук, эпĕ совет çарĕсем енне хамăрăн тăшманпа — нимĕçсемпе çапăçасшăн каçрăм».

Совет Союзĕн Геройĕ Иван Кабалин

Иван Андреевич Кабалин Канашри вагонсем юсакан заводри механически цехра токарь пулнă. Халĕ вăл фронтра, гварди сержанчĕ, миномет расчечĕн командирĕ. Çирĕмпĕр çулта çеç-ха вăл, апла пулин те икĕ çул хушши ĕнтĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешет.

Нумай пулмасть Тургель старши лейтенант Кабалинăн амăшне — Наталья Сергеевна Кабалинăна унăн ывăлĕ фронтра паттăрăн çапăçни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăюллă та паттăр çапăçнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав тата III-мĕш степень «Мухтав» орденĕпе наградăланă.

Майăн 10-мĕшĕнче фронтран тепĕр савăнăçлă çыру килнĕ. Часть командирĕ унта Иван Андреевич Кабалина Совет Союз Геройĕн ятне пани çинчен пĕлтернĕ.

«Хисеплĕ Наталья Сергеевна, — тенĕ çырура. — Сирĕн ывăлăр гварди сержанчĕ Иван Андреевич Кабалин Совет Союз Геройĕн ятне илчĕ. Çав хисеплĕ ята ăна ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ 1944 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх панă.

Çакăн пек паттăр ывăл-герой пăхса ÿстернĕшĕн Сире хĕрÿллĕн саламлатăп тата ăнăçлă ĕçлеме лайăх сывлăх сунатăп. Эсир хăвăрăн патриот-ывăлăрпа чăннипех те мухтанма пултаратăр. Вăл нимĕç захватчикĕсене паттăррăн çĕмĕрсе пырать.

Гварди саламĕпе — часть командирĕ, Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ ПОТЕМКИН».

Çак хыпара илтнĕ хыççăн Канашри вагонсем юсакан заводра савăнăçлă митинг пулса иртнĕ. Унта Иван Андреевич Кабалин патне саламлă çыру яма йышăннă.

Завод коллективĕ Совет Союзĕн Геройне Кабалина правительствăн пысăк наградине илнĕ ятпа пĕтĕм чĕререн саламланă. Унпа пĕрлех завод начальникне Поздняков юлташа правительство Ленин орденĕпе наградăлани çинчен, завод коллективĕ Хĕрлĕ Çара пулăшса тăрассишĕн малашне те ывăнма пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлеме пулни çинчен пĕлтернĕ.

Заемсен икĕ вылявĕ пулса иртнĕ

Майăн 20-мĕшĕнче Мускавра заемсен икĕ вылявĕ пулса иртнĕ: Виççĕмĕш Пятилетка Заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) 22-мĕш тиражĕ тата Виççĕмĕш Пятилетка Заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 18-мĕш тиражĕ. (ТАСС).

Пурте Хĕрлĕ Ялавлă Вăрнар районĕпе танлашăр!

Унти колхозсем майăн 20-мĕшĕнче республикăри пур районсенчен те маларах пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтерчĕ

1944 ÇУЛТИ МАЙĂН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Пурĕ акнă (процентпа)	Вăл шутра: Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсем акнă (процентпа).	Вăл шутра: Çĕрулми лартнă (процентпа).
Чурачăк	84,4	95,4	18,7
Çĕрпÿ	83,3	97,2	24,4
Калинино	80,7	97,7	38,2
Вăрнар	79,1	108,0	4,6
Красноармейски	77,3	54,1	17,8
Элĕк	72,7	86,2	1,3
Муркаш	69,4	77,2	23,0
Вăрмар	69,3	81,4	3,8
Шăхасан	69,0	81,8	3,1
Елчĕк	68,2	75,4	14,1
Сĕнтĕрвăрри	67,6	83,6	8,8
Октябрьски	66,3	79,0	8,4
Сĕнтĕр	65,7	74,8	16,0
Шупашкар	64,9	75,7	1,6
Тăвай	64,6	74,4	6,7
Советски	62,2	77,9	5,6
Куславкка	59,4	73,8	0,6
Канаш	58,8	76,3	0,7
Комсомольски	56,1	65,8	4,0
Етĕрне	56,0	72,6	2,9
Чкаловски	55,4	54,1	—
Ишлей	53,5	62,3	1,6
Улатăр	51,2	59,0	2,1
Пăрачкав	44,2	50,3	8,7
Шăмăршă	41,4	48,2	—
Çĕмĕрле	41,2	54,7	2,0
Первомайски	41,0	47,9	2,6
Йĕпреç	40,9	60,1	1,5
Кувакино	35,4	41,3	0,5
Хĕрлĕ Чутай	34,2	45,2	1,2
Шупашкар хули	73,1	124,6	6,0
Пĕтĕмпе:	61,6	71,8	7,9
Майăн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă:	43,8	51,1	—

Кашни гектартан 20 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илессишĕн

„Красный Борднер" колхоз çамрăкĕсен пуçарăвĕ

Красноармейски районри «Красный Борднер» колхоз кăçал 10 гектар çине кок-сагыз акнă. Колхозри çамрăксем çак плантацири кашни гектартан 20 центнертан кая мар кок-сагыз тымарĕ туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва тухса, кок-сагыз акакан колхозсенчи мĕнпур çамрăксене социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланă. Вăл чĕнÿре вĕсем çаксене уйрăмах палăртнă: кок-сагыза тракторпа тарăн сухаласа кĕрхи çĕртме тунă 10 гектар çине акнă. Пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илес тесе, колхозра ятарласа бригада тунă.

Бригадăри звенисен членĕ çумне 0,5 гектар кок-сагыз акнă лаптăка çирĕплетеççĕ. Унта вĕсем кок-сагыза пухса иличчен ĕçлеме, кок-сагыз йăранĕсене культиваторпа çемçетме тулаççĕ. Кок-сагыз калчи малтанхи çулçисене кăларсан, кашни гектар çине 5 центнертан кая мар тислĕк шĕвекĕпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шывĕпе апатлантарма пăхнă.

Кок-сагыз туса илес ĕçе вĕренес тесе, бригада членĕсем агрономсен лекцисене итлеме тата тĕрлĕ статьясемпе брошюрăсене вĕренме шутлаççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ Красноармейски районри «Красный Борднер» колхозри çамрăксен чĕнĕвне ырланă. ВЛКСМ Обкомĕ комсомолăн мĕнпур организацийĕсене «Красный Борднер» колхозăн çамрăкĕсем чĕнсе каланине сÿтсе явма тата пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва колхозсенчи çамрăксен бригадисемпе звенисене явăçтарма хушнă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшма

КАЛИНИНО, майăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхоз пуçарăвне ырласа, районри чылай колхозсем фронтовиксен çемьисене пулăшма планран ирттерсе тырă акаççĕ. Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз, çураки планне тултарнă хыççăн, фронтовиксен çемйисене пулăшма планран ирттерсе пĕр гектар пăрça, пĕр гектар урпа акрĕ тата шĕр гектар çĕрулми лартрĕ. Çак ĕçре колхозри комсомолецсем тăрăшса ĕçлерĕç.



Çуракинче тухăçлă та лайăх ĕçленĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен Елчĕк райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак трактор бригадисене кĕртнĕ:

17. **10-мĕш номер трактор бригади** (бригадирĕ **К. Н. Струнков** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 108 процент тултарнă, 310 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Чи лайăх трактористсем: Л. Ларина, Е. Осипова, И. Лукиянов çуркунне тумалли ĕçсен планне 100 процентран пуçласа 112 процент таран тултарнă, кашниех 100-шер килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

18. **6-мĕш номер трактор бригади** (бригадирĕ **А. П. Павлов** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 107 процент тултарнă, 350 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Чи лайăх трактористсем: Г. Яхватуллин — плана 238 процент тултарнă, 250 килограмм горючи перекетленĕ, **Я. Албутова** — плана 130 процент тултарнă.

19. **7-мĕш номер трактор бригади** (бригадирĕ **В. А. Охотин** юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 105 процент тултарнă, 395 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

С. Волковпа Федоров трактористсем плана 102-шер процент тултарнă, 105 килограмм горючи перекетленĕ.

20. **8-мĕш номер трактор бригади** (бригадирĕ Марков юлташ). Вăл тракторпа çуркунне тумалли ĕçсен планне 103 процент тултарнă, 295 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

А. Григорьева трактористка плана 117 процент тултарнă, 98 килограмм горючи перекетленĕ.

Вăрнар колхозникĕсен чаплă çĕнтерĕвĕ

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Вăрнар районĕ (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Коротков юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) майăн 20-мĕшĕнче республикăри пур районсенчен те маларах пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсене акса пĕтерчĕ.

Çураки планĕ тăрăх, районăн пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши тырăсем пурĕ 7.516 гектар акмалла пулнă, вăл 8.119 гектар акса плана 108 процент тултарнă.

Вăрнар районĕнчи малта пыракан колхозсем кăçал кашни гектартан 100-шер пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешÿ пуçарчĕç. Вĕсем çуракине тĕплĕн хатĕрленчĕç, уйхир ĕçĕсене вăхăтра пуçăнчĕç, агротехника мероприятийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тивĕçлипе кĕрешрĕç. Çулпуçăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем уйхирте вăй-хала шеллемесĕр, çине тăрса ĕçлерĕç, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç, çапла вара çуракинче чаплă çĕнтерÿ турĕç.

Пурте çуракинче малта пыракан Вăрнар районĕнчи колхозсен примерĕпе ĕçлер!

МТС çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултарчĕ

ЙĔПРЕÇ, майăн 22-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Пирĕн Хĕрлĕ Ялавлă МТС-ăн тракторсемпе çуркунне 3890 гектар сухаламалла. Паянхи кун тĕлне 3948 гектар сухаласа, плана ытлашшипех тултартăмăр.

Уйрăмăнах Макаров юлташ ертсе пыракан 11-мĕш бригада лайăх ĕçлерĕ, вăл плана 130 процент тултарчĕ. Семенов юлташ ертсе пыракан 3-мĕш номерлĕ бригада та хăйĕн планне 110 процент тултарчĕ тата 687 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çак бригадăри тракторист А. Зорин юлташ газогенераторлă тракторпа 5 гектар вырăнне 9 гектар сухаларĕ. Чураков, Григорьев трактористсем те сменăра 7—8-шар гектар сухаларĕç. Çамрăк трактористкăсем Васильевăпа Радюкова юлташсем У—2 маркăллă тракторпа 6—7-шер гектар сухалаççĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем ака ĕçне малалла та ăнăçлăн туса пыраççĕ.

МТС директорĕ Г. ИВАНОВ

Вăйлă тырпулшăн

Хирте усă сывлăш. Кăкăр çăмăллăн сывлать. Сухаçăсемпе сÿреçĕсем пĕр чарăнусăр ĕçлеççĕ. Нумай тислĕк тăкса çемçетнĕ çĕр плуг хыççăн кăпкаланса юлать, суха касисем лайăх явнă вĕрен пек чăсăлса выртаççĕ. Çакăнта ĕнтĕ вăйлă тырпул çитĕнет, çак çĕр çине ĕнтĕ кăçал виçĕ пин лав вырăнне пилĕк пин лав тислĕк кăларнă. Çак çĕр валли ĕнтĕ 80 центнер вырăнне 165 центнер удобрени пухнă. Çакă вăл вăрçăччен хинчен 3—4 хут ытларах пулать.

Çак çĕре «Трактор» колхозăн ĕçчен çыннисем апатлантарса пуянлатнă, унта ĕçчен колхозниксен алли ывăнмасăр ĕçленĕ. Кунти колхозниксем вăрçă вăхăтĕнче ытларах тырпул туса илессишĕн вăйсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Ку колхозри чи ĕçчен колхозницăсем Т. Скворцова, Антонова, Сергеева юлташсем яланах колхозницăсене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ. Валентина Творогова, Мария Галкина, Лидия Кабаева, Петр Демидов 80 центнер вырăнне 165 центнер удобрени хатĕрленĕ.

Колхоз председателĕ коммунист Татьяна Иванова:

— Çĕрĕн кашни метрĕнчен вăйлă тырă туса илмелле, — тесе хавхалантарса, ĕçре хĕтĕртсе пырать.

Каç пулсан сухаçăсем хиртен кĕчĕç. Колхоз правленинче ватă колхозниксем ака-суха ĕçĕсем çинчен пĕр-пĕринпе каласса ларассĕ. Председатель Иванова юлташ бригадирсенчен пĕр кунхи ĕçĕн итогĕсене ыйтса пĕлет, стахановецсен ячĕсене блок-нот çине çырса хурать.

— Ман 1-мĕш бригадăри çамрăк сухаçăсем çинчен калас килет. Вĕсем ытла та аван ĕçлеççĕ, — тет комсомол организацин секретарĕ Павлова юлташ.

Вăл кашни сухаçăн ятне уйрăмăн каламa тытăнчĕ. Вася Алексеев, Коля Сергеев яланах хăйсен нормине ирттерсе тултараççĕ. Акан малтанхи кунĕсенче вĕсем куллен пĕр плугпа 1,67 гектар сухаланă. Халĕ вара 2,36-шер гектар сухалаççĕ. Емельян Кузьмин, Василий Михайлов куллен 1,54—1,86-шер гектар сухаланă. Сÿреçĕ-комсомолецсем Фадей Павлов, Иван Юманов вăкăрсемпе лайăх ĕçлеççĕ. Кашни вăкăрпа куллен 0,40 гектар вырăнне 1,25 гектар сÿрелеççĕ. Вăкăрсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Акара пилĕк вăкăр ĕçлет.

Кĕске канашлу хыççăн бригадирсем, колхозниксем, сухаçăсем килĕсене саланчĕç.

Ку колхозра çамрăксем те, хĕрсем те, ватăсем те хаваслă. Кăçал кашни гектартан 100-шер пăт тĕштырă, 120-шер центнер кукăста, 120-шер центнер çĕрулми туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Колхоз ырăш калчисене 60 гектар çинче апат панă, сухатырисене 80 процентне пĕтĕмĕшпех машинăпа акса хăварнă.

Çураки хĕрÿллĕ пынă кунсенчех, колхозри ватă плотниксем А. Федоров, И. Яковлев, А. Никитин юлташсем колхоз правлени канцелярийĕ валли çĕнĕ пÿрт туса лартнă. Çапла, «Трактор» колхозра пур ĕçе те тума ĕлкĕреççĕ. Ĕçчен колхозниксен пултарулăхĕ кунта пур çĕрте те курăнать. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерÿ тума.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Кипечри «Трактор» колхоз, Комсомольски район.

Патриарх Вырăнне упраса тăраканĕ Алексий Митрополит Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Совет Союзĕн Маршалне И. В. Сталина янă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Пирĕн Православи Чиркĕвне кĕтмен çĕртен йывăр хуйăх пырса тиврĕ: вырăс чиркĕвне 18 çул хушши ертсе пынă Сергий Патриарх вилсе кайрĕ.

Вăл хăйĕн йывăр тивĕçне мĕнле ăслăн туса пынине Эсир лайăх пĕлетĕр; вăл Тăван çĕршыва юратнипе, халь пурăнса ирттерекен вăрçă тĕрĕслевĕн самантинче ăна хавхалантарса пыракан унăн патриотизмне Эсир лайăх пĕлетĕр. Эпир, унăн чи çывăх пулăшакансем, вăл Сире, пирĕн ăслă Союзри халăхсен Турă суйласа лартнă ăслă Çулпуçĕ вырăнне хурса, (вăл Сирĕн çинчен яланах çапла калатчĕ), пĕтĕм чĕререн юратнине тата Сире парăнса тăнине эпир лайăх пĕлетпĕр. Çав туйăм вăл ун чĕринче хăй Сирĕнпе паллашнă хыççăн, иртнĕ çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче эпир Сирĕнпе нихçан манмалла мар тĕл пулнă хыççăн, уйрăмах вăйлăн палăрчĕ. Çав тĕлпулу çинчен вăл мĕнле ăшă кăмăлпа аса илнине тата Эсир чиркÿ нушисем çине тимлĕн пăхнине вăл истори тĕлĕшпе мĕн тери пысăк вырăна хурса хакланине эпир уйран пĕрре кăна мар илтнĕ.

Вăл вилнипе пирĕн Чиркÿ тăлăха юлчĕ. Вилнĕ Патриарх пиллесе хăварнă тăрăх, Турă мана Патриарх Вырăнне Упраса тăраканнин ĕçне йышăнма сунчĕ.

Пурнăçра тата Чиркÿшĕн ĕçлес ĕçре ман тĕле килсе тухнă çак чи ответлă самантра эпĕ Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, хамăн кăмăлсене каласа пама кирлине туятăп.

Хамăн умра тăракан ĕçĕмре эпĕ вилнĕ Патриархăн Чиркÿ ĕçĕнче палăрнă принципĕсене пĕр улăштармасăр тата пĕр пăркаламасăр тытса пыма пулатăп: пĕр енчен — Чиркÿ йышăннă йĕрпе пыма, тепĕр енчен Тăван çĕршывшăн тата Эсир пуçпулса тăракан Правительствăшăн çирĕп шанчăклă пулма пулатăп.

Вырăс Православи Чиркĕвĕн ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен Советпа вĕçне çитиччен пĕрлĕхлĕ пулса, вилнĕ. Патриарх туса хăварнă Священнăй Синодпа пĕрле ĕçлесе, эпĕ йăнăшсенчен тата тĕрĕс мар утăмсенчен сыхланăп.

Чĕререн хисеплекен хаклă Иосиф Виссарионович, Сиртен эпĕ хам шантарса каланисене, вĕсем ман чĕререн мĕнле тухаççĕ, çавăн пекех ĕненсе йышăнма, малалла эпĕ ертсе пыракан мĕнпур чиркÿ работникĕсем Сире пĕтĕм чун-чĕререн хавхаланса юратнине тата тав тунине йышăнма ыйтатăп.

АЛЕКСИЙ, Ленинградпа Новгород Митрополичĕ, Патриарх Вырăнне Упраса тăраканĕ.

Мускав, 1944 çулхи майăн 19-мĕшĕ.

Патриарх Вырăнне Упраса тăраканĕ çинчен

Вырăссен Православи Чиркĕвĕн Священнăй Синочĕ хăйĕн кăçалхи майăн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче Патриарх Вырăнне Упраса тăраканĕ пулса ĕçлеме Ленинградпа Новгородăн Преосвященнăй Митрополичĕ Алексий кĕрессине çинчен Святейший Патриарх Сергий пехиллесе хушса хăварнине пурнăçа кĕртме йышăннă.

АГРОТЕХНИКĂНА ПУРНĂÇЛАНĂ

СОВЕТСКОЕ, майăн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăйлă тырпул туса илессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та паха туса пыма тытăнчĕç. Колхоз çуракине срокчен вĕçлерĕ, пур культурăсене те планпа кăтартнă чухлĕ акса хăварчĕ.

Колхозниксем çуракинче агротехникăна пăхăнса пычĕç. Сухаличчен участоксене пĕтĕмпех çумкуракĕсемпе кивĕ улăмран тасатнă. Колхозниксем уйрăм участоксенче ĕçлерĕç. Çуракине чи малтан Т. Петухова ертсе пыракан бригада вĕçлерĕ. Ун хыççăн вăл ытти бригадăсене пулăшрĕ.

Вăрлăхсене яровизацилесе, чÿхесе акрĕç. Пĕрлешÿллĕ столовăй та йĕркеллĕ ĕçлени ĕç тухăçлăхне ÿстерме самаях пулăшрĕ. Колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра шута илнĕ. Халĕ, çĕрулми лартассипе кантăр акассипе вĕçленĕ май, колхозниксем хăйсен кил вырăнĕсенче ĕçлеççĕ.

Колхоз кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илме ĕмĕтленет. Çавна тума пысăк шанчăк пур. Суртырисем лайăх шăтса тухрĕç. Кĕрхи калчи те питĕ парка ÿсет. Ăна çавăнтах апат панă, сÿреленĕ тата çумкурăкĕсенчен тасатнă. Çавăн пекех вăрлăхлăх клевер участокне те çумкурăкĕнчен тасатнă.

Сухари пăтшиенĕн пысăк организацилене ваннăран ...

Я. СИГАЕВ.

Шкулсенчи пӗлӳ тӗрӗслевӗ

Хӗрачасен шкулӗнче

Шупашкарти хӗрачасен 3-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗ пӗлӳ тӗрӗслевне туртерме начар мар хатӗрленнӗ. Учительсен коллективӗ вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсене пухса суркунисем пӗлӳ тӗрӗслевӗ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса панӑ.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗнче 6-мӗш «А» класс лайӑх результатсем кӑтартнӑ: 19 ачаран 17-шӗ вырӑс чӗлхипе пятеркӑсемпе четверкӑсем илнӗ, 5-мӗш «Б» класс та начар мар результатсем кӑтартнӑ: вырӑс чӗлхипе ҫыртарнӑ диктанта 20 ачаран 9-шӗ—пятеркӑсем. 7-шӗ — четверкӑсем илнӗ.

Ачасем ҫарӗс тӗлӗшпе лайӑх хатӗрленнине палӑртмалла. 6-мӗш «Б» класра вӗренекен Горелова (вӑлах отличник командирӗ), Бурлакова, Ролина тата ыттисем те вӑрҫӑ ӗҫне вӗренесси программипе пур пайӗсем тӑрӑх та тӗрӗслӳре пятерка паллӑсем илнӗ.

М. ИЛЬИН.

Малтанхи кун палӑрнӑ ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле

ОКТЯБРЬСКОЕ, майӑн 22-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Шӗнерпуҫӗнчи вӑтам шкул (директорӗ Медведева юлташ) пӗрени ҫулӗн программине ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ. Пӗлӳ тӗрӗслевӗ те кунта йӗркеллӗ пуҫланчӗ. Малтанхи кун, 5-мӗш классӑр пусне, пур классене те тӗрӗслӳ пулса иртрӗ. Ачасем пурте шкула пынӑ.

Малтанхи кун тӗрӗслӳре пулнӑ 128 вӗренекентен 23 ача—пятерка, 37 ача—четверка, 65 ача—тройка, 7 ача—двойка паллӑсем илнӗ. Тӗрӗслӳре 7-мӗш класс ытти классенчен чылай лайӑхрах результатсем кӑтартрӗ. Унта математикӑна ҫыру ӗҫ пулчӗ. Класри 19 ачаран 9-шӗ пятеркӑсем те четверкӑсем илнӗ.

Кирлӗрех предметсемпе пӗлӳ тӗрӗслевӗнче ассистентсем пулма аслӑрах классенче вӗрентекен учительсене кӗҫӗнрех классене уйӑрса лартнӑ. Ҫакӑ вӑл учительсене ҫитес ҫул хӑйсен классенче вӗренес ачасене аванрах пӗлме пулӑшать.

Тӗрӗслӳре ассистентӑн ответлӑхӗ питӗ те пысӑк. Вӑл государство контролӗн представителӗ пулса тӑрать. Унӑн тӗрӗслӳ пырақан предмета, ҫав предметӑн методикине, вӗренӳ программине лайӑх пӗлмелле. Ҫакна вӑл шкулта шута илмен. Учительница Тимофеева юлташ вӗрентекен чӑваш чӗлхи предметӗнче пулнӑ тӗрӗслӳре ассистент пулса А. Степанов вӗрентекен тӗрӗслӳ хыҫҫӑн вӑл: «Эпӗ ку предмета нимӗн те ӑнланмастӑп» тесе, протокол ҫине ҫыру ӗҫӗсене нимӗн пулмасӑрах алӑ пуснӑ.

6-мӗш класра ботаникӑна пулнӑ тӗрӗслӳре учительница Кузьмина юлташ ачасен пӗлӗвне цифрӑллӑ паллӑсемпе виҫсе хаклас вырӑнне халӗ те «пос», «плохо» паллӑсем лартса панӑ.

Малтанхи кунсенче палӑрнӑ ҫитменлӗхсене халех пӗтерес пулать.

З. МИТРОФАНОВА.

Профсоюзсен чи лайӑх библиотекисем

ВЦСПС секретариачӗ профсоюз библиотекисен 1944 ҫулхи пӗрремӗш кварталӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӗтӗмлетсе тухнӑ.

25 пин кӗнеке ытла тытакан библиотекӑсен ушканӗнче ӑмӑртура Киров заводӗн тата Молотов ячӗпе тӑракан заводӑн завкомӗсен библиотекисем мала тухнӑ. Ҫак библиотекӑсене иккӗшне те ВЦСПС-ӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата 10-шар пин тенкӗ укҫа преми панӑ. Ытти чылай библиотекӑсене пӗррӗмӗш, иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш премисем памалла тунӑ. (ТАСС).

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

(Малалли. Пуҫламӑшӗ „Чӑваш Коммуни" 85-мӗш, 92-мӗш, 94-мӗш, 95-мӗш, 96-мӗш, 98-мӗш, 99-мӗш тата 100-мӗш номерӗсенче).

СОВЕТСКИ РАЙОН ТӐРӐХ

26. Иван Семенович **Семенова** — «Труд» колхозӑн председательне.

27. Василий Анисимович **Смирнова** — Енӗшкасси ялсоветӗн председательне.

28. Татьяна Васильевна **Соловьевӑна**— «Добролет» колхозӑн ӗне сӑваканне.

29. Евгений Михайлович **Усейкина** — «Страж революции» колхозӑн председательне.

30. Анна Григорьевна **Шоркинӑна** — «Новый быт» колхозӑн бригадирне.

31. Агриппина Матвеевна **Юхтановӑна** —«Новый быт» колхозӑн бригадирне.

СӖНТӖР РАЙОНӖ ТӐРӐХ

1. Алексей Андреевич **Андреева** — «Хлебороб» колхозӑн председательне.

2. Семен Иванович **Антонова** — «Первая борозда» колхозӑн председательне.

3. Христина Григорьевна **Бочкаревӑна** —машинно-тракторнӑй станцин трактористкине.

4. Анастасия Семеновна **Быстровӑна**— «Революция 1905 года» колхозӑн колхозницине.

5. Григорий Михайлович **Гаврилова**— «Новый путь» колхозӑн председательне.

6. Таисия Порфирьевна **Галкинӑна** — «Финанс» колхозӑн сысна пӑхаканне.

7. Мария Ефимовна **Гусевӑна** — «Революция» колхозӑн ӗне сӑваканне.

8. Софья Семеновна **Давыдовӑна** — ВЛКСМ райкомӗн секретарьне.

9. Григорий Егорович **Ефимова** — районри прокурора.

10. Ирина Ивановна **Ивановӑна** — «Новый путь» колхозри пахча-ҫимӗҫ бригадин бригадирне.

11. Мефодий Кононович **Кононова** — Горький ячӗпе тӑракан колхозӑн председательне.

12. Анна Ивановна **Михайловӑна** — «Ядро» колхозӑн ӗне сӑваканне.

13. Яков Петрович **Петрова**—ВКП(б) райкомӗн пӗрремӗш секретарьне.

14. Федор Прокопьевич **Питернова** — машинно-тракторнӑй станцин комбайнерне.

15. Зоя Степановна **Поляковӑна** — «Колос» колхозӑн пахча-ҫимӗҫ бригадирне.

16. Ефим Михайлович **Полякова** — «Комбайн» колхозӑн председательне.

17. Федор Федорович **Родионова** — райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ пулнӑскере.

18. Сергей Афанасьевич **Соколова** — ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарьне.

ВӐРМАР РАЙОНӖ ТӐРӐХ

1. Анна Никоновна **Анатовӑна** — «Красные Шигали» колхозӑн колхозницине.

2. Перасковья Алексеевна **Артемьевӑна** —«Дружба» колхозӑн конюхне.

3. Павел Николаевич **Биктимирова** — райсовет исполкомӗн председательне.

4. Алексей Михайлович **Блинова** — «Заготзерно» хатӗрлев пункчӗн технорукне.

5. Михаил Иванович **Бойкова** — ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарьне.

6. Павел Васильевич **Васильева** — «Красные Шептахи» колхозӑн председательне.

7. Максим Васильевич **Верхунова** — машинно-тракторнӑй станцин старши механикне.

8. Василий Григорьевич **Григорьева** — машинно-тракторнӑй станцин комбайнерне.

9. Иван Григорьевич **Григорьева** — «Дружба» колхозӑн председательне.

10. Надежда Ивановна **Гурьевӑна** — Молотов ячӗпе тӑракан колхозӑн колхозницине.

11. Александр Демьянович **Демьянова**— «Заготсено» хатӗрлев пункчӗн директорне.

12. Михаил Григорьевич **Дьячкова** — «Новая жизнь» колхозӑн колхозникне.

13. Мария Егоровна **Егоровӑна** — «Красный Мурат» колхозӑн бригадирне.

14. Ольга Емельяновна **Емельяновӑна** машинно-тракторнӑй станцин трактористкине.

15. Нестер Ефимович **Ефимова** — СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн Вӑрмар районӗнчи уполномоченнӑйне.

16. Елена Ивановна **Ивановӑна** — «Арабось» колхозӑн бригадирне.

17. Мелания Илларионовна **Ивановӑна** — «Маяк» колхозӑн бригадирне.

18. Николай Иванович **Иванова** — машинно-тракторнӑй станцин трактористне.

19. Федор Иванович **Иванова** — «Свобода» колхозӑн председательне.

20. Агафия Игнатьевна **Игнатьевӑна**— «Красная Кубня» колхозӑн колхозницине.

21. Александра Ефремовна **Игнатьевӑна** — Калинин ячӗпе тӑракан колхозӑн ӗне сӑваканне.

22. Вера Васильевна **Иевлевӑна** — «Заря» колхозӑн председательне.

23. Марк Илларионович **Илларионова**— машинно-тракторнӑй станцин трактор бригадин бригадирне.

24. Акулина Васильевна **Ильинана** — «Комбайн» колхозӑн колхозницине.

25. Елизавета Кондратьевна **Кондратьевӑна** — машинно-тракторнӑй станцин трактористкине.

26. Александра Николаевна **Мясниковӑна** — «Дружба» колхозӑн агитколлектив руководительне.

27. Александр Николаевич **Николаева** — «Дружба» колхозри уйхир бригадин бригадирне.

28. Аверьян Николаевич **Николаева** — Калинин ячӗпе тӑракан колхозӑн председательне.

29. Мария Николаевна **Николаевӑна**— «Арабось» колхозӑн колхозницине.

30. Никонор Павлович **Павлова** — СССР Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн Вӑрмар районӗнчи уполномоченнӑйӗн агентне.

31. Екатерина Захаровна **Семеновӑна**— Калинин ячӗпе тӑракан колхозӑн сурӑх пӑхаканне.

32. Кирилл Семенович **Семенова** — «Большевик» колхозӑн председательне.

33. Мария Сергеевна **Сергеевӑна** — «Свобода» колхозӑн колхозницине.

34. Александр Дмитриевич **Смирнова**— ВКП(б) райкомӗн пӗрремӗш секретарьне.

35. Василий Григорьевич **Соснова** — «Арабось» колхозӑн председательне.

36. Васса Степановна **Степановӑна** — «Вутлан» колхозӑн колхозницине.

37. Иульяна Федоровна **Федоровӑна** — Кӗҫӗн Енкасси колхозӗн ӗне сӑваканне.

38. Анна Филипповна **Чесноковӑна** — «Красная Кубня» колхозӑн колхозницине.

39. Василий Алексеевич **Чеснокова** — «Социализм» колхозӑн хурт-хӑмӑр пӑхаканне.

40. Павел Алексеевич **Чернова** — «Красные Шигали» колхозӑн председательне.

ҪӖРПӲ РАЙОНӖ ТӐРӐХ

1. Ефросиния Тимофеевна **Абрикосовӑна** — ВКП(б) райкомӗн инструкторне.

2. Семен Александрович **Александрова** —«Ударник» колхозӑн председательне.

(Малалли пулать).

Италири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

СОЮЗНИКСЕН ҪАРӖСЕМ «ГИТЛЕР ЛИНИНЕ» ТАТНА

ЛОНДОН, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири ҫарӗсен главнӑй штабӗ ҫапла пӗлтерет: союзниксен Италири ҫарӗсем, тӑшмана сывлӑш ҫавӑрса илме памасӑр, пӗтӗм фронт талккӑшӗпех наступлени туса пыраҫҫӗ. «Гитлер линийӗшӗн» ҫапӑҫма тытӑннӑ. Кунти вырӑнсем малалла куҫма кансӗрлеҫҫӗ пулин те, союзниксен ҫарӗсем хӑвӑрт малалла куҫнӑ, тӑшман хӑйӗн Лири шывӗнчен кӑнтӑртарахри оборона линийӗн фронтне нумайччен тытса тӑма пултарайман. Америкӑн 5-мӗш армийӗн ҫарӗсем ку секторта пуҫ пулса тӑракан ҫӳллӗ вырӑнсене туртса илнӗ те ӗнтӗ. Ҫапла вара халӗ тӑшмана кайри оборона линийӗ патне хӑваласа янӑ. Ку лини Пикоран пуҫланса Террачина патне ҫитиччен пырать. Ҫав оборона линийӗ тӑшманӑн Лири шывӗ хӗрринчи улӑх урлӑ каҫса каякан оборона линийӗн флангне хӳтӗлесе тӑрать. Англин 8-мӗш армийӗ тӑшманпа «Гитлер линийӗн» пӗтӗм фрончӗ талккӑшӗпех хаярррӑн ҫапӑҫать.

Союзниксен авиацийӗн шултӑра соединенийӗсем ҫаплах тӑшман порчӗсене, чугун ҫул сооруженийӗсене, мототранспортне тата артиллери позицийӗсене тапӑнса ҫапӑҫнӑ.

ЛОНДОН, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири ҫарӗсен главнӑй штабӗ паян ирхине пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен ҫарӗсем «Гитлер линине» татнӑ.

Америка ҫарӗсем Гаэта хулине туртса илнӗ.

ЛОНДОН, майӑн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири ҫарӗсен главнӑй штабӗ ҫапла пӗлтерет: союзниксен наступлени туса пыракан ҫарӗсем тӑшмана ҫаплах пӗтӗм фронт талккӑшӗпех татти-сыпписӗр вӑйлӑн хӗссе пыраҫҫӗ.

Англин 8-мӗш армийӗн ҫарӗсем Лири шывӗ хӗрринчи улӑхра талккӑшӗпех «Гитлер линийӗн» малти посчӗсем вырнаҫса тӑнӑ вырӑнсене кӗрсе кайнӑ, тӑшман оборонин тӗп тӑрӑхӗ умне пырса тухнӑ. Разведка ҫакна пӗлнӗ: тӑшманӑн ҫав улӑхри оборони, кӗтсе тӑнӑ пекех, чӑнахах та вӑйлӑ, тӑшман кунта союзниксен ҫарӗсене хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫать.

Америкӑн 5-мӗш армийӗн ҫарӗсем ҫаплах тӑшмана унӑн тӗп оборона позицийӗсенчен хӗсе-хӗсе кӑлараҫҫӗ. Гаэта ҫурутравне тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатнӑ. Французсен ҫарӗсен малти чаҫӗсем халӗ Кассиноран хӗвеланӑҫнерехре ларакан Пикопа Пантекорвона хӑратса тӑраҫҫӗ.

Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗсри авиацийӗ 640 вӗҫев тунӑ.

ЮГОСЛАВИРИ ҪАПӐҪУСЕМ

ЖЕНЕВА, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Югославирен ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Хӗвеланӑҫ Боснире халӑха ирӗке кӑларасшӑн кӗрешекен ҫар чаҫӗсем тӑшманӑн темиҫе пин салтакран тӑракан колоннине аркатса тӑкнӑ.

Санджакра, Приепольепе Соничипа секторӗнче, нимӗҫсем чылай пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Кордунпа Прокуплере нимӗҫсемпе усташасем поражени тӳсеҫҫӗ.

Словенире, Веленье районӗнче кӗрешекен Югославси чаҫӗсем трофейӑсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра тупӑсем, пулеметсем тата ытти хӗҫпӑшалсем.

Хорватире ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

БОЛГАРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРӐНТАН ТУХНИ

СТАМБУЛ, майӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Болгарин Божилов ертсе пыракан правительстви майӑн 19-мӗшӗнче вырӑнтан тухнӑ.

Оскар Ланге профессор калани

Халӗ Мускава килнӗ Америка профессорӗ г-н Оскар Ланге кӑҫалхи майӑн 21-мӗшӗнче ТАСС представительне ҫакӑн пек каланӑ:

«Польша патриочӗсен Союзӗ чӗннипе эпӗ Польшӑн ССР Союзӗнчи ҫарне курма тата поляксем ҫак ҫӗршыври мӗнле пурӑннипе паллашма килтӗм. Эпӗ, тӳрӗ кӑмӑллӑ Америка гражданинӗ пулса, хамӑр пуҫне, никам ячӗпе те мар, ҫӳретӗп. Хамӑн вӗрентес ӗҫе пурнӑҫлас шутпа эпӗ Польшӑн ССР Союзӗнчи деятелӗсемпе калаҫрӑм, Польша ҫарӗнче пултӑм, поляксем вӗренекен шкулсемпе ачасен ҫуртӗсене кайса куртӑм. Ҫавӑн пекех эпӗ Сталин Маршалпа Молотов господин патӗнче те пултӑм.

Ҫарта пулнӑ чухне эпӗ салтаксемпе, официально йӗркепе мар, 15 хутчен тӗл пултӑм. Эпӗ вӗсемпе Польшӑн пуласлӑхӗ пирки вӗсем мӗн шухӑшлани ҫинчен калаҫрӑм. Ҫав калаҫусем мана тивӗҫлӗ материал пачӗҫ, эпӗ унпала Пӗрлешӳллӗ Штатсене таврӑнсан усӑ курӑп.

Сталин Маршал патӗнче пулнӑ чухне эпӗ унпала Польша ҫарӗ майшӑн мӗнле курӑнса кайни ҫинчен тата ССР Союзӗнчи поляксем мӗнле курӑнни ҫинчен калаҫрӑм. Маршал Сталин: Польша Европӑра питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрӗ, тесе каларӗ. Польша вӑйлӑ ҫӗршыв пуласси Совет Союзӗн интересӗсемпе килӗшӳллӗ, терӗ вӑл.

Эпӗ Молотов господина — ССР Союзӗнче чухне вӑл мана лайӑх кӗтсе илсе хӑналанӑшӑн, хамӑн тахҫанхи тусӑма Ванда Василевскаяна — мана хӑй енчен тата Польша патриочӗсен Союзӗ енчен чӗререн кӑмӑлласа кӗтсе илнӗшӗн, ҫавӑн пекех тата Берлинг генерала — эпӗ поляксен ССР Союзӗнчи ҫарӗнче пулнӑ чухне мана лайӑх хӑналанӑшӑн тав тӑватӑп. Эпӗ Польша ҫарӗнчи офицерсемпе салтаксене тата ҫар служащийӗсем пулса тӑракан хӗрарӑмсене мана чӗререн кӑмӑлласа кӗтсе илнӗшӗн тав тӑватӑп. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпӗн, Совет Союзӗшӗн тата Польшӑшӑн пӗр тӑшман пулса тӑракан нимӗҫ ҫарне хӑвӑртрах ҫӗнтерме, ҫапӑҫура ӑнӑҫусем тума ырӑ сунатӑп». (ТАСС).

Совет Союзне Англи судно̆сен пысӑк караванӗ ҫитнӗ

ЛОНДОН, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англирен Совет Союзне суднӑсен чи пысӑк караванӗ лайӑх ҫитнӗ. Каравана Британи флочӗн ҫар карапӗсем сыхласа пынӑ, конвой составӗнче пӗр хӑватлӑ авианосец пулнӑ.

Тинӗс министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, тӑшманӑн подводнӑй лодкисемпе авиацийӗ каравана 12 кун хушши атакӑлама хӑтланса пынӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшманӑн икӗ подводнӑй лодкине путарни паллӑ пулнӑ, унсӑр пуҫне тата икӗ подводнӑй лодкине путарнӑ пулӗ тесе шутлаҫҫӗ, темиҫе подводнӑй лодкине сиенленӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ.

Ҫав хушӑра тӑшман, торпедӑсем ярса, Англин «Махратта» ятлӑ эскадреннӑй миноносецне шыва путарнӑ. Союзниксен авиацийӗн пӗр самолет та пӗтмен.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖН ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Официально пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер союзниксен авиацийӗн шултӑра вӑйӗсем Ҫурҫӗр Францири тата Бельгири чугун ҫул сооруженийӗсемпе ытти вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ. Ҫавӑн пекех тата Дьепп порчӗн сооруженийӗсем ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ.

Майӑн 20-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле бомбардировщиксен хӑватлӑ соединенийӗсем каллех Франци ҫыранӗнчи вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ. «Москито» йышши самолетсем Кельн хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Союзниксен авиацийӗ ӗнер Берлинпа Брауншвейг хулисене тапӑннӑ чухне нимӗҫсен 125 самолетне персе ӳкернӗ.

ЛОНДОН, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра ҫапла пӗлтернӗ: майӑн 20-мӗшӗнче кӑнтӑрла «Мэродер» тата «Хэвок» йышши самолетсем нимӗҫсен аэродромӗсемпе Францири вӑрҫӑ объекчӗсем ҫине 350 тонна бомба пӑрахнӑ. Ҫӑмӑл бомбардировщиксемпе вӑтам бомбардировщиксен ытти соединенийӗсем Франци ҫыранӗнчи вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ. Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: майӑн 20-мӗшӗнче ҫӗрле Англи самолечӗсем ҫак талӑкра иккӗмӗш хут Дьепп портӗнчи сооруженисене тапӑннӑ.

Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: майӑн 20-мӗшӗнче кӑнтӑрла союзниксен сывлӑш-ҫар вӑйӗсем нимӗҫсен Европӑри оккупациленӗ ҫӗршывсенчи объекчӗсене тапӑнма 4.000 вӗҫев тунӑ.

ОСЛО ХУЛИ ӲРАМӖСЕНЧЕ ПУЛСА ИРТНӖ ТЫТӐҪУ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Скандинавири телеграф бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Осло хули варринче, урамра вырӑнти халӑхпа полици хушшинче тытӑҫу пулса иртнӗ. Тытӑҫу хаҫатсенче Норвеги ҫыннисене ҫар службине илмелле тунӑ тесе пӗлтернӗ хыҫҫӑн пулса иртнӗ. Тытӑҫу темиҫе сехет хушши пынӑ.

ЮГОСЛАВИН ПУРИЧ ЕРТСЕ ПЫРАКАН ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРӐНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, майӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Англи пичечӗ ҫапла пӗлтерет: майӑн 19-мӗшӗнче Югославин Пурич ертсе пыракан Каирти правительстви вырӑнтан тухнӑ. Кунта ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, ҫӗнӗ правительство тума Шубашиче хушнӑ. Шубашич ҫак сӗнӗве йышӑннӑ чухне ҫапла пӗлтернӗ: правительство членӗсен шутне Пурич правительствинче ҫар министрӗ пулса ӗҫленӗ Михайлович генерала кӗртместӗп, тенӗ.

Хаҫатсем ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Шубашич Хорвати хресченӗсен партийӗн лидерӗсенчен пӗри пулса тӑрать, гитлеровецсем Югославие кӗрсе кайиччен вӑл Хорвати банӗ (губернаторӗ) пулса ӗҫленӗ. Юлашки вӑхӑтра Шубашич Нью-Йоркра эмигрант пулса пурӑннӑ.

ФИНН ХАЛӐХӖ ШВЕЦИЕ ТУХСА ТАРАССИ ВӐЙЛАНСАХ ПЫРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Швецие Финляндирен тухса тарнӑ ҫынсем вӗҫӗмсӗрех килсе тӑраҫҫӗ. «Арбетарен» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Ботнически залив урлӑ Швецие Финляндирен тата 85 фин тарса каҫнӑ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумӗ Михаил Алексеевич **Максимов** юлташа ССР Союзӗн Иранри Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ пулма уйӑрса лартнӑ.

СССР Верховный Совет Президиумӗ Константин Александрович **Михайлов** юлташа, сывмар пулнӑ пирки, ССР Союзӗн Иранри Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗн ӗҫӗсенчен хӑтарнӑ.

Герой Филипп Ахаев

Фашистла ҫӗлен-калтасем Сталинград патне вӑрӑ-хурахла тапӑнса пынӑ вӑхӑтра большевиксен партийӗн ретне кӗме заявлени пачӗ вӑл. «Мана большевиксен партийӗн ретне йышӑнма ыйтатӑп. Парти умӗнче, аслӑ Сталин умӗнче ҫапла тупа тӑватӑп: Тӑван ҫӗршыва нимӗҫ захватчикӗсенчен хӳтӗлесе хӑварассишӗн вӑйхалӑма хӗрхенсе тӑмӑп. Хамӑн мӗншур пӗлӳлӗхе хурса, тӑшмана аркатса тӑкиччен ҫӗмӗрсе пырӑп. Эпӗ хамӑн тупӑпа тӑракан вырӑнта тӑшман пирӗн позици урлӑ нихӑҫан та каҫаймӗ, ӑна пӗтерсе тӑкӑпӑр».

Парти ӑна хӑй ретне илчӗ. Филипп Петрович Ахаев—тупа тунине пурнӑҫларӗ. Вӑл Тӑван ҫӗршывӑн ытти патриочӗсемпе пӗрле геройла Сталинград патӗнче фашистла ирсӗрсене ҫавӑрса илнӗ ҫӗре тата пӗтерсе тӑкнӑ ҫӗре хутшӑнчӗ. Вӑл ертсе пыракан тупӑ расчечӗ нимӗҫсен пӗр пин салтакӗпе офицерне кӑна мар «лаш тӗнчене» ӑсатнӑ, тӑшманӑн вӑрҫӑ техникине те сахал мар пӗтерсе тӑкнӑ.

1943 ҫулхи январь. Сталинград патӗнче хупӑрласа илнӗ тӑшман хурҫӑ ункӑран хӑтӑлма тапаҫланчӗ, йышлӑ танксем, самолетсем ярса, Совет ҫӗрӗ ҫинче тискер ӗҫсем тунӑшӑн хӑйсене хаяррӑн тавӑрассинчен хӑтӑлма шутларӗ. Пирӗн гвардеецсем тӑшмана пӗтерсе тӑкма тупа турӗҫ.

Филипп Ахаев хӑйӗн туппине тӑшмана тӳрӗн персе тӑмалли вырӑна кустарса тухрӗ те тӑшмантан 400 метрта вырнаҫрӗ. Питех те хӗрӳ ӗҫлерӗ вӑл: фашистсен 4 танкне ҫунтарса ячӗ, ҫӗр салтакӗпе офицерне яхӑн пӗтерсе тӑкрӗ. Снарядсем ҫурӑлчӗҫ, пульӑсемпе минӑсем шӑхӑра-шӑхӑра иртрӗҫ. Филипп Ахаев ҫапах тӳссе иртттерчӗ, чи хаяр ҫапӑҫура чаппа мухтавлӑх туянчӗ. Ҫак ҫапӑҫушӑн правительство ӑна Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑларӗ. Ҫак кӗрешӳ вӑл совет ҫыннисем вилӗме куҫ-кӗретӗн пӑхса тӑшманпа паттӑррӑн ҫапӑҫни, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе геройла ӗҫсем туни пулчӗ. Ҫакӑ вӑл Мамай ҫарне аркатса тӑкнӑ чухнехи евӗрлӗ ҫапӑҫу пулчӗ.

1943 ҫул фашистла нимӗҫ ҫарӗшӗн хӑрушӑ ҫулталӑк пулчӗ. Пирӗн боецсем ҫуркунне оборонӑна лайӑх ҫирӗплетнӗ, наступлени тума хатӗрленнӗ, ҫӗр ӑшне блиндажсемпе убежищӗсем тунӑ. Вӗсем тӑшмана лайӑххӑн кӗтсе илме хатӗрленнӗ.

Фашистла ҫарсем те наступлени ҫине тӑрсах хатӗрленчӗҫ. Тӑшман ҫапӑҫӑва ҫӗнӗ техника—«тигрсем», «фердинандсем» тата «пантерсем» кӗртрӗ. Нимӗҫсем пирӗн ҫарсене хӑйсене Сталинград патӗнче тимӗр тылӑпа тылланӑшӑн тавӑрма ӗмӗтленчӗҫ. Вӗсем пирӗн ҫарсене Орӗлпа Курск патӗнче ҫавӑрса илме, кайран вара ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе, пирӗн ҫарсене пӗтерсе тӑкма ӗмӗтленчӗҫ.

Вӗсен чӑрсӑр ӗмӗчӗ путлашчӗ. Пирӗн боецсемпе офицерсем арӑслансем пекех паттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ. Хӗвел хӗртнӗрен, июль кунӗсем ытла та шӑрӑх тӑчӗҫ. Фашистла авиаци, кунне самолетсемпе пин хутчен те ытла вӗҫе-вӗҫе килсе, пирӗн ҫапӑҫу йӗркисене бомбӑсем тӑкнипе ҫӗмӗрме хӑтланчӗ, ҫӗрпе пылчӑка сывлӑша сӗклерӗ. Ҫӗрпе пӗлӗт хушши тӗксӗмленчӗ, нимӗҫсен «тигрӗсемпе» «фердинанчӗсем» шӑва-шӑва иртрӗҫ, ӳсӗрӗлсе анкӑ-минкӗленнӗ нимӗҫсем чупрӗҫ, ним тӗлли-паллисӗр персе тӑчӗҫ.

— Тӑшмана тӳррӗн персе тӑмалла! — хупрӗ хӑйӗн ҫапӑҫусенче тӗрӗсленнӗ юлташӗсене Филипп Ахаев, — гвардеецсем каялла чакмаҫҫӗ, хаяр тӑшман тискерленнинчен те хӑрамаҫҫӗ...

Ахаев туппине тӑшмана тӳррӗн персе тӑмалли вырӑна илсе тухнӑ та питех те ӑстан маскировка тунӑ.

Нимӗҫсем атакӑланӑ. Танксем иртнӗ. Пуҫ тӑрринче тӑшман самолечӗсем явӑнса ҫӳренӗ.

Хӳтлӗхре ларакан боецсем куҫа вӗҫертмесӗр хӑйсен ӑслӑ командирӗ ҫине тинкерсе пӑхнӑ. Никам та сӑмах хушман, анчах кашнийӗн чӗринчех ҫакӑ шухӑш пулнӑ: хура ҫӗлен-нимӗҫсене ну-и ӑшалатпӑр та ӗнтӗ.:.

Вӗсем ҫапӑҫӑва кӗме команда кӗтнӗ.

Нимӗҫсем 300—400 метрта анчах пулнӑ. Акӑ, ҫапӑҫу пуҫлама команда та пачӗҫ:

— Фашистла ҫӗлен-калтасем ҫине осколоклӑ снарядсемпе — огонь!

Гвардеецсем ҫил-тӑвӑллӑн персе кисретнипе, нимӗҫсем чӗтрене ернӗ, танксем каялла ҫавӑраннӑ, вӗсем ҫапӑҫу хирӗнчен тӑракан нимӗҫсене лапчӑта-лапчӑта тӑкнӑ. Ҫавӑнтах тепӗр команда пачӗҫ:

— Нимӗҫ танкӗсем ҫине броньӑна персе шӑтаракан снарядсемпе — огонь!

Малта пыракан танка персе ҫӗмӗрчӗҫ, иккӗмӗшне—виҫӗ снаряд пырса тиврӗ, ҫунса кайрӗ, ун хыҫҫӑн тата тепри те ҫунма тытӑнчӗ. Танксем каялла ҫавӑрӑнчӗҫ. Нимӗҫсем чӑтса тӑраймарӗҫ, каялла тарчӗҫ, фашистсен виллисем тӗмӗн чухлӗ вырта-вырта юлчӗҫ. Ҫакӑ Филипп Ахаевӑн ҫапӑҫури расчетне питех те савӑнтарчӗ.

Нимӗҫсем, ҫӗнӗ вӑй илсе, каллех наступлени пуҫарнӑ. Ҫав кун нимӗҫсем ҫичӗ хутчен наступлени тума хӑтланнӑ. Анчах вӗсен кашни атакинех пирӗн паттӑр расчет путлантарса лартнӑ, нимӗҫсем питех те пысӑк ҫухату тӳснӗ.

Атака хыҫҫӑн атака туса, нимӗҫсем пирӗн оборонӑна кӑштах хӗсӗнсе хӗме пултарчӗҫ. Июлӗн 9-мӗшӗнче тӑшман Молотычи ялӗ патӗнчи ҫӳллӗ вырӑн патне сывхарчӗ. Танксем те персе ҫитрӗҫ. Лару-тӑру питех те хӑрушланчӗ.

Филипп Ахаев батарея командирӗнчен ҫав ҫӳллӗ вырӑна хӑйӗн расчетне тӑратма ирӗк ыйтрӗ. Батарея командирӗ килӗшрӗ. Филипп Ахаев вара хӑйӗн расчетне ҫапӑҫӑва хатӗрленме хушрӗ. Тупӑ йӗри-тавра снаряд хыҫҫӑн снаряд ҫурӑлчӗ, нимӗҫ пулемечӗсем пӗр вӗҫӗмсӗр кӗрлерӗҫ, сывлӑшран нимӗҫ самолечӗсем бомбӑсем тӑкрӗҫ, — Филипп Ахаев пӗр утӑм та чакмарӗ: пӗр вӑтам танк персе ҫӗмӗрчӗ, икӗ «тигрне» ҫунтарса ячӗ.

Нимӗҫсен ҫуллахи наступленине мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар чарса лартрӗ. Июлӗн 12-мӗшӗнче пирӗн часть наступление куҫрӗ. Халран кайнӑ нимӗҫ ҫарӗсем, пирӗн хӑватлӑ вӑйсем пыра-пыра ҫапнипе, хӗвеланӑҫнелле чакрӗҫ, анчах вӗсем хирӗҫ тӑма пӗр минутлӑха та чарӑнмарӗҫ.

Филипп Ахаевӑн расчечӗ августӑн 30-мӗшӗнче Марчихина Буда ялӗ патӗнчи ҫапӑҫура каллех чапа тухрӗ. 200 метра ҫывхарнӑ нимӗҫсем пулеметсенчен персе тӑнӑ. Пирӗн гвардеецсем вӗсене тупӑран ӑшалантарнӑ. Нимӗҫсем чӑтса тӑраймап, ҫапӑҫу хирӗнче темиҫе вунӑ салтакӗпе офицерне пӑраха-пӑрахах тарнӑ. Ҫӳллӗ вырӑнсем—пирӗн алӑра.

Днепр урлӑ каҫнӑ вӑхӑтра Ахаевӑн туппи маршпа пынӑ самантрах огневой позици йышӑнчӗ те тӑшман тупписемпе танкӗсене хирӗҫ ҫапӑҫма пуҫларӗ. Нимӗҫсем Филипп Ахаевӑн туппине пӗтерсе тӑкма нумай вӑй хучӗҫ, анчах ӑнӑҫу тӑваймарӗҫ. Ахаев туппи тӑшмана чарса лартрӗ, ҫакӑ вара пирӗн ытти тупӑсемпе вӑйсене илсе пыма май пачӗ.

Октябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн чаҫсем Днепрӑн сылтӑм ҫыранӗнчи плацдарма аслӑлатассишӗн ҫапӑҫрӗҫ. Тӑшман пире хирӗҫ пехотӑн, танксемпе авиацин пысӑк вӑйӗсене ҫапӑҫӑва кӗртсе ячӗ. Вӗсем пирӗн чаҫсене Днепр ку енне сирсе ывӑтасшӑн хыпса ҫунчӗҫ. Пирӗн полк «Кӗҫӗн ҫӗр» ҫинче («Малая земля» ҫинче) тӑчӗ. (Боецсем хӑйсем ҫапла каларӗҫ, мӗншӗн тесен полк вырнаҫнӑ лаптӑк шывран мӗн пурӗ те 200—300 метрта анчах пулнӑ).

Нимӗҫсем кунӗн-ҫӗрӗн атака турӗҫ. Пӗлӗтре пӗр вӗҫӗмсӗр тӑшман самолечӗсем явӑнса ҫӳрерӗҫ, пирӗн малти лини ҫине бомбӑсем тӑкрӗҫ. Гвардеецсем ҫакӑн пек тупа турӗҫ:

— Вилсен вилер, анчах плацдарма хамӑр алӑрах сыхласа хӑварар!

Филипп Ахаев ҫак хӑрушӑ минутра хӑйӗн расчетне ҫакӑн пек каласа хавхалантарчӗ: «Пирӗн ниҫта та чакмалли ҫук. «Кӗҫӗн ҫӗре» хӳтӗлесе хӑварайрӑтпӑр пулсан, — ҫӗнтеретпӗр. Акӑ мӗнле гвардеецсен девизӗ!»

«Кӗҫӗн ҫӗре» хӳтӗлесе хӑварнӑ, тӑшмана хӗвеланӑҫнелле 750 километр таран сирсе ывӑтнӑ. Днепрӑн сылтӑм енчи Украинӑра Губин ялӗ патӗнчи пӗчӗк участокрах нимӗҫсем атакӑпа темиҫе пин салтак, 30 танк кӗртсе янӑ. Филипп Ахаевӑн расчечӗ 12 сехет хушши ҫапӑҫнӑ, унӑн снарячӗсем те пӗтес патнех ҫитнӗ. Ахаев вара хӑйӗн боецӗсене винтовкӑсемпе автоматсем хатӗрлеме хушнӑ. Нимӗҫсем часах психикӑллӑ атака пуҫланӑ. Филипп Ахаев ҫӗр сумӗпе ҫӗлен пек шуса пыракан фашистсем ҫине вут-хӗм тӑкма команда панӑ.

Ҫакӑн пек майпа «Кӗҫӗн ҫӗре» хӳтӗлесе хӑварнӑ. Сталинла гвардеецсем тӑшмана хирӗҫ хӑюллӑн та паттӑррӑн кӗрешсе ҫӗнтереҫҫӗ, ҫав аслӑ ҫапӑҫусенче геройсем ҫуралаҫҫӗ. 1943 ҫулхи октябрӗн 17-мӗшӗнче ССР Союзӗн Верховный Совечӗн Президиумӗ гвардин старши сержантне Филипп Петрович Ахаева Совет Союз Геройӗн ятне панӑ.

Гварди майорӗ А. СОЛОДОВНИКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ ҪАР.

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0— 67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типографи №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14 400 экз.